Вырма маршручĕсемпе

# «Ăнса пулнă тырăна аллăма тытас килет», –



терĕç уçласа илнĕ шултра тулă пĕрчисене пӳрнесем витĕр юхтарса вырмари хресчен савăнăçне унпа пĕрле пайласа информаци ушкăнĕпе Çĕньял Шурча йĕтемĕ çине килсе çитнĕ Л. Рыжковапа О. Иванова **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)**. Любовь Александровна район администрацийĕнче культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ пулса ĕçлет, Ольга Ивановна – Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин «Муркашри халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центр» республикăри патшалăх учрежденийĕн директорĕ. Çак специалистсем вырăна килнипе усă курса вырмана хутшăнакансем нумай ыйтусене ĕç вырăнĕнчен тапранмасăрах татса пама пултарчĕç.



– Ĕçлекенсемпе влаç хушшинчи çыхăну паянхи пек çывăх пулман пулсан нумай ыйтусем çӳллĕ шая çĕкленмĕччĕç. Пирĕн район администрацийĕ çакна шута хуни савăнтарать кăна, – терĕ тырă аланă çĕртен йăпăртлăх пăрăнса Лидия Пискарева ĕçчен.

Йĕтем çинче алă усса ларакан çук. Пĕрисем алаççĕ, теприсем хиртен килнĕ тырăна типĕтсе ампара кĕртессипе тимлеççĕ. Ĕçлеççĕ пулин те, хăйсене ĕç ветеранĕ ята мĕнле йĕркепе парасси, ача пособийĕсемпе субсидисем илесси, ватăсене социаллă пулăшу парасси тата ку енсемпе юлашки вăхăтри улшăнусем кăсăклантарнине пытармарĕç вĕсем. Кашни ыйту çинех тулли хурав илчĕç.

Çак вăхăтра йĕтем çине тырă тиенĕ ГАЗ-53 автомашина пырса кĕчĕ. Руль умĕнче – 1970 çултанпа водительте ĕçлекен Александр Михайлович Фадеев. Кашни çул вырмана хутшăннă водителĕн ĕç юратăвĕ малти вырăнта пулни вăл кабинăран тухса пĕрремĕш утăмсем тунинченех курăнчĕ. Пĕшкĕнсе маларах килнĕ тырă купине аллисене чикрĕ. «Ăшă марха, апла пулсан, типĕ – хăрамалла мар», – çиччĕ виççе калаçрĕ комбайнсем патĕнчен йĕтем çине тырă турттаракан водитель А. Фадеев **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)**.



«Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕнчи çак ӳкерчĕксене юлашки кунсенчи çумăрсемччен курма май пулчĕ. Паян хуçалăхри вырма ĕçĕсен пысăк пайĕ хыçа юлнă ĕнтĕ. Ĕнерхи тырă куписем те **(виççĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)** кĕлете кĕме ĕлкĕрнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар. Ĕçлекенĕн ĕç ăнать. Маларах тăнă уяр кунсемпе усă курса Шурчасем çĕр улмин пĕр пайне те (ир пулакан сорта) кăларма ĕлкĕрчĕç.

Кĕрхи ĕçсем хуçалăхра малалла пыраççĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Ыран – Нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсен кунĕ

# Тĕп вырăнта – ял пурнăçне лайăхлатасси

***Сентябрĕн пĕрремĕш вырсарни кунĕнче çĕршыври нефть тата газ промышленноçĕнче ĕçлекенсем хăйсен професси уявне паллă тăваççĕ. Пирĕн районта вара çут çанталăк газĕпе çыхăннă ĕçсене пурнăçлакан тĕп организаци – «Чувашсетьгаз» уçă акционерлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ. Район çыннисем юлашки çулсенче çут çанталăк газĕпе усă курассине пурнăçра тĕп вырăна кăларчĕç пулсан, вĕсен ку ĕçре сиксе тухакан ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси те пĕлтерĕшлĕ пулăм. Çакна шутласа район хаçачĕн экономика пайĕн редакторĕ А. БЕЛОВ уяв умĕн асăннă организаци ертӳçипе Решит Халиуллович ЧЕБЕНОВПА тĕл пулнă, газ сферинче ĕçлекенсене саламланă май район шайĕнчи газификаци ыйтăвĕсемпе кăсăкланнă, вĕсен хуравĕсемпе паллаштарма ыйтнă.***



**– Решит Халиуллович, Сире çывхаракан уявпа саламлатăп. Унпа пĕрлех ĕçĕр пирки ыйтса пĕлес килет: районăмăр республикăра ялсене çут çанталăк газĕ кĕртессипе ыттисенчен ăнăçуллăрах ĕçлерĕ те çав малтуртăмлăх сирĕн ĕç çине те йывăрлăхсем хушмарĕ-и?**

– Саламланăшăн тавах. Ĕçĕ нумай, анчах пурнăç малалла аталаннине йывăрлăх теес килмест. Çапах йывăрлăхсене çĕнмесĕр çăмăллăх та çук. Çакна ăнланса пĕрине тăвассишĕн теприне чăтатпăр, тӳсетпĕр. Вăл пĕтĕмĕшле ял пурнăçне лайăхлатассипе çыхăнни пире çанă тавăрсах ĕçлеттерет. Раççей тата Чăваш Президенчĕсемпе Правительствисем яла аталантарассипе организацисенче те «кăвак çулăм» çынна сиен кӳмĕ, ăна пула чрезвычайлă ларутăру сиксе тухмĕ, пушар алхасмĕ, çынсем шар курмĕç.

**– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, Сирĕн филиал Муркашсемпе кӳршĕллĕ районсене те пăхса тăрать. Ĕлкĕрейретĕр-и? Çак ĕçсене пурнăçлама ĕç коллективне мĕн шая çитертĕр?**

– Паллах ĕлкĕретпĕр. Паян тумалли ĕçсене ырана хăвармасан ĕç айне пулмастăнах. Çакна тĕпе хурса ĕçлетпĕр те. Етĕрнери тата Хĕрлĕ Чутайри газ хуçалăхĕн участокĕсем те пирĕнпе пĕр шухăшлă пулни ĕçсене хăй еккипе кайма памасть. Паян пирĕн филиал виçĕ район территорийĕпе пĕтĕмпе 2020 километр газ пăрăхĕсем пăхса тăрать. Вăл шутран Муркаш районĕнче – 900 километра яхăн. Кунпа пĕрлех пирĕн 500-е яхăн ГРП тата ШРП пăхса тăмалла. Виçĕ районта 28100 килте çут çанталăк газĕпе усă кураççĕ пулсан, Муркашра вĕсем 11 пине яхăн. Çаксемпе пĕрлех ку районсен çыннисене тата предприятисене баллонри газпа та çителĕклĕ тивĕçтеретпĕр, Москакассинче автогазозаправка тытса тăратпăр. Çăмăл мар, анчах, каларăм-çке, ĕçсене пĕлсе йĕркелесе пырсан тата паянхи ĕçе ырана хăвармасан ниçта та ĕç юхăнмасть. Çакна филиалта ĕçлекенсем те (вĕсем пурĕ 174 çын) лайăх ăнланаççĕ, хăйсене хушнă ĕçе вăхăтра та пахалăхлă пурнăçлама тăрăшаççĕ.

**– Ял çыннисем тата газ хуçалăхĕ çине мĕнле пăхнăн туйăнать сире?**

– Ял çыннисем газ тĕлĕшпе ответлăха туйни малти вырăнта. Вĕсем çут çанталăк газĕ пӳрт-çурта хутса ăшăтмалли йӳнĕрех топливо пулнине ăнланса илсе унпа ытларах та ытларах усă курма тăрăшаççĕ. Çапла вара ялсенче пурăнакансем çут çанталăк газĕпе усă курас тесе пурăнмалли çуртсене реконструкцилеме пуçларĕç. Ку ĕçсем уйрăмах Муркаш районĕнче массăллă пулса пыраççĕ. Çакна шута илсе пурăнмалли нумай хватерлĕ çуртсенче те хваттерсене газ кăмакисем лартса пама пуçларăмăр. Ĕлĕкрех тунă çуртсем тĕлĕшпе кунта ыйтусем чылай, паллах, анчах май пур таран вĕсене те вăраха ямасăр татса пама тăрăшатпăр. Куншăн вара çынсем тав сăмахĕ кăна калаççĕ. Çак тав сăмахĕ пирĕн ответлăха татах ӳстерет.

**– Решит Халиуллович, уяв умĕн камсене ятранах асăннă пулăттăр?**

– Ĕçне пĕрле тăватпăр та никама та уйăрса калас килмест. Кашниех хăйне шаннă ĕçре ответлă специалист. Салам сăмахĕсене вара района газификацилесе пĕтерес ĕçе тӳпе хывнисенчен пуçлас килет. Район администрацийĕ, капиталлă строительствăпа архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕ, ялсене газ кĕртессипе ĕçленĕ вун-вун предприяти паян района газификацилессипе туса ирттернĕ ĕçсемшĕн уяв саламне тивĕç. Паян кунччен Муркаш, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче ялсене газификацилессипе пурнăçланă ĕçсене упрасси тата ялсен пурнăçне ку тĕлĕшпе малалла аталантарасси – пирĕн паянхи ĕç. Эсир панă майпа усă курса манăн паян ветерансенчен уйрăмах райгазăн пĕрремĕш пуçлăхне В.И. Егорова, И.С. Соловьев тĕп инженера, ПТО пуçлăхĕнче 10 çул ăнăçлă ĕçленĕ Г.С. Абросеева, нумай çул ĕçлекенсенчен Ф. Поляковăна, Ю. Митрофанова, Г. Митрофанова, О. Прокопьева, И. Вершкова, Е. Крысинана, шанчăклă ĕçлекен çамрăксенчен Н. Захаров водителе, М. Николаев электрогазосварщика, АГЗС операторне А. Степановăна палăртас килет. Вĕсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ, малтуртăмлă ĕçлеме хавхалантараççĕ. Пирĕн ĕç пĕрлехи çимĕç пулнăран пурне те уяв ячĕпе саламлатăп. Хисеплĕ ĕçтешĕмĕрсен куллен ĕçе сывлăхпа тухса килĕсене телейлĕ таврăнмалла пултăр!




«Моргаушимежрайгаз» филиалта ĕçлекенсен пĕр ушкăнĕ черетлĕ ĕç кунĕ умĕн.

малашлăхшăн йышăннă программăсене пурнăçа кĕртессине эпир хамăр тивĕç тесе те шутлатпăр, хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех вăхăтра та пахалăхлă тума тăрăшатпăр. Акă паянхи куна эпир Мăн Сĕнтĕрти, Йӳçкассинчи, Тури Панклипе Анатри Панклири газ пайлакан пунктсене çитес хĕл валли капиталлă юсаса çитертĕмĕр. Кунпа пĕрлех çĕр айĕпе каякан газ пăрăхĕсене тутăхасçĕресрен сыхлакан Ярапайкассинче вырнаçнă катод хӳтĕлевĕн станцине юсарăмăр, чылай çĕрте çĕр çийĕн каякан газ пăрăхĕсене сăрларăмăр. Тумалли татах нумай, анчах çуллен çакăн пек калăпăшлă ĕçсене пурнăçласан, район çыннисем хĕлле те, çулла та çут çанталăк газĕсĕр лармĕç. Эпир ĕçленине кура район çыннисем те çут çанталăк газĕпе усă курмалли правилăсене пăсмасан ялсенче те, предприяти-

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Ыран – Следстви комитечĕн кунĕ

## Пуçламăш ĕçсем паллă

Пурнăç тытăмĕнчи çĕнĕлĕхсем право сыхлавĕн органĕсене те айккинче тăратса хăвармаççĕ. Акă Раççей Федерацийĕнчи право органĕсен системинчи çĕнĕ тытăм – РФ прокуратури çумĕнчи Следстви комитечĕ – çак кунсенче хăй йĕркеленнĕренпе çулталăк çитнине паллă тăвать. Мĕн тухрĕ-ха малтанхи вăхăтра çĕнĕлĕх куçĕ умне, мĕнле йывăрлăхсене çĕнсе аталану çулĕ çине тухать-ха паян Следстви комитечĕ?

Чăваш Республикипе ĕçлекен РФ прокуратурин Следстви комитечĕн следстви уйрăмĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕ Муркашсăр пуçне Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне районĕсен территорийĕсенчи саккун йĕркелĕхне пăхса тăрать. Йĕркеленӳн пĕрремĕш кунĕсенче пирĕн пай чылай йывăрлăхсемпе тĕл пулчĕ: пай валли уйăрнă ятарлă çурт çукки, оргтехника çителĕксĕрри, следовательсем пайран инçетре пулни тата чылайăшĕн асăннă системăра ĕçлеме опыт сахал пулни. Анчах малашлăха шанса йĕркеленнĕ коллектив умри йывăрлăхсене çĕнсе кĕске хушăрах пысăк та пĕлтерĕшлĕ ĕçсем туса ирттерчĕ, халăх хушшинче шанăça кĕчĕ.

Паянхи кун пирĕн пайра самай опыт пухма ĕлкĕрнĕ ĕçченсем ĕçлеççĕ. Вĕсем: пай ертӳçи С. Савельев, унăн çумĕ А. Гаврилов, шалти ĕçсен пайĕпе ĕçлекен следователь Л. Давлетшин, аслă следовательсем И. Хайбуллин, С. Кошкин, Э. Шипцов, Е. Григорьев, ĕç тăвакан аслă инспектор И. Семенова. Вĕсем пурте паян хăйсене шанса панă ĕçе ответлăха туйса пурнăçлаççĕ. Уяв умĕн вĕсене те, следстви органĕсенче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисене те, пирĕн пулăшаканăмăрсене те Следстви комитечĕ çулталăк тултарнă ятпа саламлатăп, çăмăл мар ĕçре малашне татах та ӳсĕмлĕрех ĕçлессе шанса тăратăп.

**А. ГАВРИЛОВ,**
**Следстви комитечĕн следстви уйрăмĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн ертӳçин ĕçĕсене туса пыраканĕ.**

## Уголовнăй ĕç пуçарнă

Муркашра пурăнакан Д. И. Игнатьев кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнче хăйсен хваттерне кĕрсе ӳсĕр пуçа пырса кĕнĕ шухăша пурнăçлама тытăнать. Çак вăй питти арçын 76 çулхи паралич çапнă мăнаккăшне мăшкăллас тĕллевпе вăл выртакан пӳлĕме кĕрсе хирĕç тăрайман ватăпа хирĕçлесех ар çыхăнăвне кĕрет.

Ку ĕç тĕлĕшпе РФ Уголовнăй Кодексĕн 131-мĕш статйин 1-мĕш пункчĕпе пăхнă преступление тунă тесе уголовнăй ĕç пуçарнă.

**С. КОШКИН,**
**Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн аслă следователĕ.**